# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ 1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

44 (8611) № * Юнкун, çĕртме (июнь) уйăхĕн 20-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


Симĕс ĕç çи – 2018

## Уяр кунпа туллин усă кураççĕ



**Юлашки вăхăтра хĕвеллĕ кунсем выльăх апачĕ хатĕрлессипе çанă тавăрса ĕçе кӳлĕнме май пачĕç. Малашлăх пирки шутлакансем çанталăк условийĕсене кура паян иртен пуçласа каçчен улăх-çаранта ĕçлеççĕ.**

**Районта симĕс ĕç çине ыттисенчен маларах тухнă хуçалăхсенчен пĕри – Е. Андреев яч. хис. кооператив. Хуçалăхра выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе пĕтĕмпех механизациленĕ. Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Михаил Атласкин механизатор хайне шанса панă МТЗ – 82 тракторпа ирхи шуçăмран пуçласах – нумай çул ӳсекен курăксен пуссинче. 46 çул стажлăскер уяр кунсен пĕр минутне те ĕççĕр ирттермест. Акă 3 кун хушшинче Михаил Никодимович 100 гектарлă пусса çулса пĕтерчĕ.**

**«Механизациленĕ бригадăра кашнин хăйĕн тĕллевĕ: эпĕ çулатăп, В. Димитриев тавăрать, А. Скворцов типĕ утта рулонсене пухать», – терĕ вăл юнашар хирте таса пусă тытса тăрассипе тăрăшакан А. Семенов агрегачĕ енне тинкерсе. Тепĕр уйра вара пĕр тăван Алексейпа Димитрий Порфирьевсем çумпа кĕрешессипе тата çуртрисене апатлантарассипе еплe ĕçленипе те опытлă механизатор интересленсех тăрать. «Кашни ĕçĕн – хăйĕн вăхăчĕ, анчах утçи паян – тĕп вырăнта», – палăртрĕ вăл.**

**Кӳршĕри «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕнче вара сенаж хывма пуçланă.**

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Районта

## Тивĕçлĕ йышăнусем турĕç

Депутатсен район Пухăвĕн черетлĕ ларăвĕ июнĕн 19-мĕшĕнче иртрĕ. Ларăва Çатракасси ял тăрăхĕнчи Ятман ялĕнчи иртнĕ çул юсаса çĕнетнĕ клубра ирттерчĕç. Ларăва хутшăннисем çавăн пекех çав кун Çатракасси вăтам шкулĕн ĕçĕ-хĕлĕпе интересленсе паллашрĕç.

Ларура пăхса тухма депутатсем кун йĕркине 15 ыйту кĕртрĕç. Вĕсем районта вĕренĕве 2014 – 2020 çулсенчи тапхăрта аталантарассин муниципалитет программи мĕнле пурнăçланса пынипе, муниципалитет пурлăхне приватизацилемелли прогноз планне пурнăçлассипе, районта пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна аталантарассипе, халăх дружинникĕсене ĕçшĕн хавхалантарассипе, предприятисемпе учреждениесене тата организацисене районăн тава тивĕçлĕ çыннисен ячĕсене парассин положенине çирĕплетессипе çыхăннă. Çавăн пекех депутатсем пĕр мандатлă 16-мĕш Турай тата 19-мĕш Отаркка суйлав округĕсемпе депутатсен Муркаш район Пухăвĕн депутачĕсен хушма суйлавне ирттерессипе, Муркаш район суйлав комиссийĕн полномочийĕсене Муркаш территори суйлав комиссине парассипе, муниципалитет пурлăхне харпăрлăха çирĕплетессипе, депутатсен район Пухăвĕн унчченхи йышăнăвĕсене улшăнусем кĕртессипе, наградăлама тăратассипе çыхăннă ыйтусене те пăхса тухрĕç.

Депутатсем пур ыйтăва та тĕплĕ сӳтсе явса тивĕçлĕ йышăнусем турĕç.

Лару ĕçне район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев хутшăнчĕ, сӳтсе явнă ыйтусем çинче чарăнчĕ.

Ларăва хутшăннисене Ятман клубĕнчи «Ятман ен» пултарулăх ушкăнĕ ташă-юрăпа савăнтарчĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Ларуран

## Ыйтни кăна çителĕксĕр пулсан

Район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи ĕç укçине вăхăтра тата туллин тӳлессин, официаллă ĕçлеменнине чакарассин ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комиссин черетлĕ ларăвĕ июнĕн 18-мĕшĕнче иртрĕ. Ларăва комисси председателĕ – район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев ертсе пычĕ.

Лару ĕçне райадминистрацин, суд приставĕсен районти пайĕн, прокуратурăн, налук инспекцийĕн, ĕçпе тивĕçтерекен центрăн, социаллă страховани фончĕн, пенси фончĕн районти пайĕн явапллă ĕçченĕсем хутшăнчĕç.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ – экономика, АПК аталанăвĕпе муниципалитет харпăрлăх управленийĕн пуçлăхĕ Андрей Миронов муниципалитет пурлăхĕпе тата çĕр участокĕсемпе усă курнăшăн арендаторсем вырăнти бюджета тӳлесси мĕнле шайра пулни тата налукпа çыхăнман парăмсене чакарассипе мĕнле ĕçсем туса ирттерни пирки каласа кăтартрĕ.

Çак вăхăта çĕр участокĕсемпе усă курма район администрацийĕпе тунă килĕшӳсем пĕтĕмпе 1 пин те 740, участоксен пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 8 пин те 550 гектар. Муниципалитет пурлăхĕпе усă курма юридици сăпачĕллисемпе тунă килĕшӳсем 10 (241,6 гектар). Çулталăкри аренда тӳлевĕ çĕр участокĕсемпе усă курнăшăн 7 млн тенкĕ ытла, муниципалитет пурлăхĕпе усă курнăшăн – 347 пин тенкĕне яхăн.

Çав вăхăтрах муниципалитет пурлăхĕпе тата çĕр участокĕсемпе усă курнăшăн парăмсем пурри шухăшлаттарать. Иртнĕ кунсенче вăл кăштах чакнă пулин те, çак вăхăта дебитор парăмĕ пĕтĕмĕшле 2 млн та 800 тенкĕне яхăн.

Парăмсене вăйпа шыраса илессипе хатĕрленĕ ĕçсем суд приставĕсен патĕнче те пур, претензи ĕç-хĕлне те туса ирттереççĕ, иск завяленийĕсене район судне те, Чăваш Республикин Арбитраж судне те, миравай суд участокне те хатĕрлесе панă. Пысăк парăмлă арендаторсен шутĕнче «СК «Виком», «Дорисс-Нефтепродукт» пĕрлешӳсем, Н. Никитин, И. Никитин, «Путь Ильича» агрофирма, А. Козлов фермер, Ю. Хусаинова, В. Иванов, М. Зайцев, С. Юхтанов, Т. Петрова.

Парăмсене пĕтересси пирки ларура çивĕч калаçу пулчĕ. Комисси председателĕ Ростислав Тимофеев парăмçăсенчен çивĕчрех ыйтма кирли пирки каларĕ, кашни парăмçăпа уйрăммăн тата куллен ĕçлемеллине палăртрĕ, район администрацийĕн пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайĕ умне çитес икĕ эрне хушшинче пĕтĕм парăм сумминчен çуррине кая мар шырса илме задача лартрĕ. Мĕншĕн тесен район бюджетне пырса кĕмен кашни тенкĕ укçа районта мĕн те пулин туса çитерейменнипе çыхăннă. Район прокурорĕ Сергей Павлов вара, ыйтни кăна çителĕксĕр пулсан, налук органĕпе çыхăнса законодательство шайĕнче пысăк парăмçăсене административлă майпа айăплама кирли пирки каларĕ, икшер çул парăм пухса пыракан предприятисем тĕлĕшпе панкрут ĕç-хĕлне пуçлама сĕнчĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Çырăнтару – 2018

## Хаçат çырăнма васкăр

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата июль уйăхĕнчен илсе тăма çырăнтармалли тапхăр вĕçленсе пырать. Кĕрхи-хĕллехи каçсенче райхаçата вулас тесен паян-ыранах почтальонпа тĕл пулма васкăр. Хаçата июнĕн 25-мĕшĕччен çырăнтараççĕ.**

**Ултă уйăха çырăнмалли хак – 434 тенкĕ те 22 пус.**


**24 ИЮНЯ – ПРИЕМ ДЕТСКОГО ВРАЧА-ОФТАЛЬМОЛОГА**

**Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 15**

**Запись по тел. 8-967-475-87-57.**

Имеются противопоказания. Проконсультируйтесь со специалистом. 2-2.

**Саламлатпăр**

Пирĕн юратнă çыннăмăра, мăшăра, аннене, кукамая – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Елена Николаевна ЗАХАРОВĂНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей сунатпăр. Мĕн шутланисем яланах пурнăçланса пыччăр.

**Саламлакансем: мăшăрĕ, ывăлĕ, 2 хĕрĕ, кĕрӳшĕ, 2 мăнукĕ, тăхлачи.**

**Республика кунĕ**

## Республикăн тĕп уявĕ çывхарать

**Июнĕн 24-мĕшĕнче Чăваш Ен хăйĕн тĕп уявне – Республика кунне – паллă тăвать.**

Июнĕн 23–24-мĕшĕсенче республикăри районсемпе хуласенчи тĕп площадкăсенче регион тата çĕршыв шайĕнчи вун-вун фестиваль, концертсем иртеççĕ. Вĕсенчен чи паллисем – Пĕтĕм Раççейри «Родники России» халăх пултарулăхĕн фестивалĕ тата ал ĕç маçтăрĕсен Пĕтĕм Раççейри «Русь мастеровая» конкурс.

Икĕ куна тăсăлакан уяв мероприятийĕсене Раççейри 20 регионти тата ют çĕршывсенчи коллективсем, çавăн пекех хамăрăн республикăри коллективсем хутшăнаççĕ. Муркаш район администрацийĕн культура пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, **«Муркаш» тата «Екрем» фольклор ушкăнĕсем** те Шупашкарта хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарĕç.

Республикăри пин ачаран тăракан пĕрлештернĕ хор кăçал та уява хутшăнакансемпе хăнасене савăнтарĕ. **Хор йышĕнче – Муркаш районĕнчи 20 ача**.

Пĕтĕм чăвашсен Акатуйĕ кăçал июнĕн 23-мĕшĕнче Шупашкарти Хĕрлĕ лощадьре иртет.

Асра юлмалли ытти самант та чылай пулĕ. Вăл шутра, паллах, Пĕтĕм тĕнчери фейерверксен фестивалĕ.

**Хамăр инф.**

**Пĕлме**

## Право порталĕ ĕçлет

Интернет сетĕнче халăхи вăхăтра куллен кирлĕ информаци ресурсĕ чылай. Раççей Федерацийĕн Юстици министерстви йĕркеленĕ «Нормативные правовые акты в Российской Федерации» право порталĕ те ăнăçлă ĕçлет. Вăл федерацин «Нормативные правовые акты Российской Федерации» Единой системы информационно-телекоммуникационного обеспечения Минюста России» и «Федеральный регистр муниципальных нормативных правовых актов» патшалăх информаци тытăмĕсен пайĕ шутланать. Ăна Роскомнадзор саккунлă йĕркепе регистрациленĕ.

Право порталĕнче (http://pravo-minjust.ru, http://право-минюст.рф) талăкĕпех ирĕклĕ те тӳлевсĕр информаци илме, норматива право акчĕсемпе кирек хăш вăхăтра та паллашма пулать. Унти информаци вăхăтра çĕнетессипе тата йĕркелессипе ответлă органсене çирĕплетнĕ.

Право порталĕнче Раççей Федерацийĕн муниципалитет йĕркеленĕвĕсенчи патшалăх реестрĕнчи, Раççей Федерацийĕн тулаш экономикин тĕрлĕ килĕшĕвĕ, Федераци саккунĕсен тата ытти документăн нормативпа право акчĕ чылай.

**Хамăр инф.**

**Пирĕн календарь**

## Астăвăмпа хурлăх кунĕ

Июнĕн 22-мĕшĕ – Аслă Отечественнăй вăрçăра вилнисене асăнмалли кун. Çав кун 1941 çулта фашистла Германи СССР çине тапăннă. Аслă Çĕнтерӳ çăмăл килмен. 27 миллиона яхăн çын паянхи мирлĕ пурнăçшăн пуç хунă. Шăпах çав кун радиопа пĕрремĕш хут çак сăмахсем янăрарĕ: «Пирĕн ĕç тĕрĕс. Тăшмана çапса аркататпăр. Çĕнтерӳ пирĕнте пулать». Çапла пулса тухнă та.

**Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав**

# Цифра телевиденийĕ пиркиех

**Цифра телевиденийĕ, цифра телевиденийĕпе паракан передачăсене пăхасси пирки иртнĕ çул та, кăçал та пĕр хут кăна мар çырнăччĕ. Мĕншĕн тесен асăннă ыйту вулакансене интересылентерсех тăрать. Халиччен тӳлевсĕр усă курнă аналоглă телевидение çывăх вăхăтрах пăрахăçлама палăртаççĕ вĕтха. «Триколорăн» тата ытти спутник телевиденийĕн тарелккисене туянса телепередачăсем пăхасси вара тӳлевлĕ. Абонентсен уйăхсерен тӳлесе тăма тивет.**

**Ку енĕпе цифра телевиденийĕ пуриншĕн те тенĕ пекех меллĕ темелле. Мĕншĕн тесен 20 каналпа паракан передачăсене тӳлевсĕр пăхма май пур. Çитменнине пахалăхне аналоглă телевидени передачисен пахалăхĕпе танлаштараймăн. Уйрăмлăх çĕрпе пĕлĕт хушши пекех.**

«Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав» редакцине килнĕ черетлĕ çыру Муркашран пулчĕ. **Муркашри Восточная урамра пурăнакан арçын** акă мĕн çырать:

**«Майĕпен аналоглă телевидение пăрахăçласа пыма пуçлаççĕ тенине илтрĕм. Пирĕн вара, Муркашри Восточная урамра пурăнакансен, цифра телевиденийĕпе паракан передачăсене халĕ те пăхма май çук. Çак лару-тăрура пирĕн мĕн тумалла-ши? Малашне телевиденипе паракан передачăсене тӳлевсĕр майпа пачах пăхма май пулмĕши?» – тет вăл.**

Малтанах вулакана халĕ **Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствине ертсе пыракан Михаил Анисимовăн** материалĕпе паллаштарасшăн. Шăпах ĕнтĕ вăл маларах цифра телевиденийĕн майĕсемпе малашлăхĕ пирки çырса пĕлтернĕччĕ:

«Цифра эфир телекуравĕн сетьне тăвассипе çыхăннă проект Чăваш Енре 6-мĕш çул пурнăçланать. Çак тапхăрта Раççей телевидени тата радио хыпарĕсен сечĕн «Чăваш Республикин радиотелевидени паракан центрĕ» филиалĕн специалисчĕсем 42 станцие хута янă. Çав шутран 14-шне малтанхи телевышкăсемпе çыхăнтарнă. Асăннă объектсенче пуринче те телеканалăн пĕрремĕш пакетне трансляцилемешкĕн ятарлă передатчиксем вырнаçтарнă. Паянхи куна сигнал Чăваш Енре пурăнакансен 99 процентне патне çитет. Çапла вара регионта пурăнакансен федераци шайĕнчи 10 телеканала цифра пахалăхĕпе пăхма май пур. Кусем вĕсем: «Первый канал», «Россия 1», «Матч ТВ», «Россия – Культура», «Россия-24», «Телекомпания НТВ», «Петербург – 5 канал», «Карусель», «Общественное телевидение России», «ТВ ЦЕНТР – Москва».

Иккĕмĕш мультиплекса тепĕр 10 телеканал кĕрет: «Рен-ТВ», «Спас», «СТС», «Домашний», «Пятница», «Звезда», «Мир», «ТНТ», «Муз ТВ», «ТВ-3». Хальлĕхе ăна пурте пăхма пултараймаççĕ-ха.

Цифра эфир телекуравĕ – телекуравăн халхи йышши технологийĕ. Цифра сигналĕ тĕрлĕ чăрмав тĕлĕшпе чăтăмлă, çавна май сасă тата ӳкерчĕксем пысăк пахалăхлă пулаççĕ. Халхи йышши телевизор çав сигнала тытăр тесен дециметр диапазонĕллĕ антенна çеç кирлĕ. Кивĕ телевизор валли антеннăсăр пуçне тата приставка туянма тивет. Çитменнине пĕрремĕш тата иккĕмĕш мультиплекссен программисене пăхнăшăн абонент тӳлевĕ çук.

Федерацин цифра телекуравĕ çине куçассин тĕллевлĕ программи кăçал вĕçленет. 2019 çулхи январьтен пуçласа аналоглă телекурава майĕпен сӳнтерсе пыма пуçлаççĕ. Çавăнпа республикăра пурăнакансен цифрăлли çине куçассине кая хăвармасан аван».

Михаил Анисимовăн сăмахĕсенчен пĕтĕмпех ăнланмалла пек туйăнать. Паянхи куна республикăра пурăнакансен 99 процентĕ цифра телевидение пăхма пултарать пулсан, Муркашри Восточная урамра пурăнакансем республикăри юлашки 1 процент шутĕнче марах пулĕ.

Çапах та татăклă хурав илме **акционерсен «ВолгаТелеком» усă обществин Чăваш Республикинчи филиалĕн Муркашри линипе техника участокĕн пуçлăхĕпе Андрей Макаровпа** çыхăнтăм.

Андрей Михайлович та çавнах çирĕплетрĕ. Чăннипех те район территорийĕнче цифра телевиденийĕн передачисене хăшĕ-пĕри 20-ĕшпех, теприсем 10-шне кăна пухма пултарни пулма пултарать. Çакă тĕрлĕ сăлтавран килет. Анчах та цифра телевидение пачах пăхма май çукки чăнлăхпа çыхăнман. Мĕншĕн тесен Муркашра пĕр урамра пăхайраççĕ, теприн пуçне çук-и вара?

Вулакана çавна кăна каласа хăварас пулать. Сирĕн халхи йышши çĕнĕ телевизор пулсан, ăна цифра телевиденийĕн передачисене йышăнмалла майлаштарнă ĕнтĕ. Апла пулсан сирĕн цифра телевиденийĕн сигналĕсене йышăнма дециметр диапазонĕллĕ антенна çеç туянмалли юлать. Кивĕ телевизорпа усă куратăр пулсан вара антеннăсăр пуçне тата ятарлă приставка туянас пулать. Антеннăна сигналсене йышăнма Шупашкар еннелле е урăх еннеле вырнаçтарни те пĕлтерĕшлĕ. Мĕншĕн тесен цифра телевиденийĕн сигналĕсене саракан телевышкăсем район территорийĕнче те пур. Вĕсенчен пĕри Исетеркке ялĕ патĕнче вырнаçнă.

Районта цифра телевиденийĕн антеннисемпе приставкисене вырнаçтарса парассипе ĕçлекен предпринимательсем те пур. Вĕсен пулăшăвĕпе те усă курма пултаратăр. Реклама кирлех мар пулĕ. Район хаçачĕн хыçалти страницисене уçса пăхма кăна сĕннĕ пулăттăм.

**«Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав» телефонĕсем: 62-2-82, 8-927-857-42-06.**

**В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

**Иртни манăçмасть**

# Батальонри учитель



Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вĕçленнĕренне 73 çул... Аслă Çĕнтерĕве 73 çул... Пирĕншĕн çав хăрушă кунсем-çулсем хыçран хыçа юлса пыраççĕ. Анчах аттесем, асаттесемпе мăн асаттесем çапăçу хирĕнче пуç хурса фашизма çĕварлăхланă вăрçă çулĕсене пирĕн манма юрамастех. «Ан пултăрччĕ вăрçă», – тетчĕç кăшт ĕлĕкрех фронтран сывă таврăннисем. Паян пурăнакан ветерансем те çак сăмахсем таврах хăйсен калаçăвĕсене ирттереççĕ. Ан пултăрччĕ вăрçă, анчах... Çĕр çинче ырăпа усал кĕрешнĕ чух вăрçă вут-çулăмĕ час-часах пирĕн тавра явăнать, ашшĕ-амăшĕсемпе çывăх тăванĕсен куççульне юхтарать, çамрăксен малашлăх ĕмĕчĕсене татать.

Çĕршыв интересĕсене тĕпе хурса арçын тивĕçне вăрçă хирĕнче пурнăçланисем кашниех пирĕн ырă сăмаха тивĕç. Ăна пирĕн сӳнме памасăр ăруран ăрăва куçарса пымалла. Кашнин паттăрлăхĕ асра пулмалла.

Истори страницине эпир паян Турай ял тăрăхĕнчи Çулав ялĕнче çуралса ӳснĕ Александр Николаевич Ярдыков тĕлĕнче усрăмăр. Çĕнтерӳçĕ-салтак Тутаркасси районне кĕнĕ ялта 5 ачаллă хресчен çемйинче 1915 çулхи пуш уйăхĕн 9-мĕшĕнче çуралнă. Аппăшĕне йăмăкĕ хушшинчи виçĕ арçын ачаран Санька асли пулнă. Çавăнпа та ашшĕ арçын ĕçĕн пĕр пайне мĕн пĕчĕкрен аслă ывăлĕ çине хунă. Ачаран яваплăха туйма вĕреннĕ скер, çĕнĕ пурнăç йĕркине хăнăхса 1923 – 1929 çулсенче Турайри ултă класлă шкулта пĕлӳ пухнă. Вĕренӳре ĕлкĕрсе пырса лайăх пĕлӳ илнине çирĕплетсе, Санькăна шкул канашĕ удостоверени панă. Çакă мал ĕмĕтлĕ яша шкулпа ытларах çывăхлатнă та. Вăл малашлăхпа пурăнакан ял ачисене çырма-вулама вĕрентес ĕçе кӳлĕннĕ.

Тăрăшуллă учителе кĕçех асăрхаççĕ. 1937 çулхи август уйăхĕн 15-мĕшĕнчен тытăнса 1939 çулхи ноябрь уйăхĕччен Александр Николаевич Сĕнтĕр районĕнчи Янăмри пуçламăш 7 класлă шкул директорĕнче тăрăшать. Мал ĕмĕтлĕскер çемье те çавăрать. Çул çитнине кура 22 çулхи арçынна 1939 çулхи кĕркунне çара илеççĕ. Унăн çар службин Инçет Хĕвелтухăçĕнче батальон учителĕнче пусăнать. Вăл вăхăтшăн çамрăк салтаксене хутла вĕрентесси те пирĕн çĕршывшăн пĕлтерĕ-шлĕ ĕç шутланнă. Чăваш каччи салтаксене вĕрентет, нарядсене-хуралсене çӳрет, ырă шанчăкпа пурăнать. 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕ. А. Ярдыков кĕçĕн лейтенант тар склачĕн хуралĕнче тăрать. Шăпах çакăнта вăл тепĕр офицертан фашистла Германи пирĕн çĕршыва вăрă-хурахла тапăнни пирки пĕлет. Апла вăрçă пуçланнă...

Хăрушлăх пурне те пĕрлештерет. 1942 çулта службăра ялан ырă тĕслĕхпе палăрнă Александр Николаевича сывлăш десанчĕн çарне куçараççĕ. Çакăн хыççăн вĕсене нимĕç фашисчĕсемпе çапăçма яраççĕ. Фронтра пирĕн ентешĕн тĕрлĕ çар операцине хутшăнма тивет. Кунта вăл пурнăç висине, вилĕм юнашар çӳренине хăй куçĕпе курать. Хăюлăхпа паттăрлăхшăн Çулав каччи фронтра сахал мар медаль-ордена тивĕçет. 1941 – 1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн панă Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин орденĕ фронтовика Аслă çĕнтерӳ хыççăн 40 çултан шыраса тупать.

А. Ярдыков фронтран Аслă Çĕнтерӳпе тăван ене 1946 çулта таврăнать. Киле çитсенех фронтовик Турайри 7 класлă шкулта ачасене вĕрентме пуçлать. Яланах ырă малашлăха шанса пурăннă ветеран 1958 – 1963 çулсенче И. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕренсе биологипе химии учителĕн дипломне алла илет. Çакăн хыççăн тивĕçлĕ канăва тухиччен Александр Николаевич Турайри вăтам шкулта ачасене асăннă предметсене вĕрентет, пурнăç çулĕ çине тухма хатĕрлет.

**А. БЕЛОВ.**

Июнĕн 22-мĕшĕ – Астăвăмпа хурлăх кунĕ

# Паянхи ыра пурнăçшăн тăрăшнă



Район хаçачĕн страницисенче 90 çултан та иртнĕ аксакалсем çинчен çырнă тĕрленчĕк чылай пичетленет. Вĕсем пурăнса иртнĕ «ĕмĕр саккисем» ирĕксĕрех тарăн шухăша ярасçĕ. Иртнĕ хаяр вăрçăччен çуралса вăрçă çулĕсенче этем тӳсеймен йывăрлăха чăтса ирттернĕ, вăрçă хыççăнхи çулсенче те çинĕ-çимен пурăнса эпир паян ыр курса пурăнакан пурнăçа тăвассишĕн вĕсем тар юхтарнă. Ялсенче арçынсене фронта илсе кайсан çав 10 – 14 çулти çамрăксен аслисемпе пĕр тан вăй хума тивнĕ. Чăннипех те геройсем мар-и-ха вĕсем?

Пирĕн ялта та çакăн пек пысăк хисепе тивĕçлĕ, 91 çултан иртнĕ Мария аппа пурăнать. Мария Сергеевна Апчар ялĕнче 1927 çулта çуралса ӳснĕ. Çăмăл пулман унăн ачалăхĕ. Пĕчĕк Маша 2 çулта чухнех амăшĕсĕр тăрса юлнă. Ашшĕ вара тепре авланать те, Машăна тăван мар амăшĕ пăхса ӳстерет.

Тем те тӳссе ирттернĕ Мария ачалăх çулĕсенче. Малтанхи вăхăтра килти хуçалăхра, каярахпа колхозра те тертленме лекнĕ. Ирсĕр вăрçă пуçланнă чух вăл вун тăватă çулхи хĕр ача пулнă. Шкулта 7 класс вĕренсе пĕтерме кăна тӳр килнĕ ăна. Пиччĕшĕсене вăрçă хирне ăсатсан хĕр ачан пурнăç самаях йывăрланать. Килти хуçалăхри ĕссене пуçĕпех кӳлĕнме тивет.

1942 çулта çамрăк хĕр ФЗО шкулне вĕренме каять, унтан вĕренсе тухсан Шупашкарти 320-номерлĕ заводра снарядсем кăларнă çĕрте ĕçлеме тытăнать.

«Ун чухне саккунсем питĕ çирĕпчĕ, – каласа парать Мария кинемей. – Ĕçе темиçе минут юлса çитсен судпа та айăплама пултаратчĕç. Пĕррехинче мана киле кайса килме ирĕк пачĕç, анчах та килтен каялла кайма пăрахут çине ĕлкĕреймерĕм. Эпир ун чухне Ильинкăран Шупашкара пăрахутпа çӳренĕ. Аптăранипе Атăл хĕррипе хулана çуран кайма шут тытрăм. Еплерех нушаланма лекрĕ ун чух мана. Атăл хĕррипе утма май çук вырăнсем сахал мар, çăлкуçсем... Шупашкар Ильинкăран тӳрĕ пăхсан çеç çывăх туйăннă-мĕн. Темĕнле макăрса, вараланса пĕтрĕм пулин те, ĕçе вăхăтра çитме пултартăм, – терĕ кинемей.

Заводра ĕçлеме те çамрăк хĕре çăмăл пулман. Ĕçĕ те сиенлĕ, апатçимĕçĕ те хура çăкăрпа вĕлтренрен е урăх курăкран пĕçернĕ яшка кăна, вĕсем те çителĕклĕ пулман. Апла пулин те çĕнтерĕве çывхартас тесе ывăннине пĕлмесĕр тăрăшса ĕçленĕ.

Кĕçех чунтан кĕтнĕ кун çитнĕ. Еплерех савăннă вăрçă чарăннине, фашиста хăйĕн йăвинчех тĕп тунине пĕлсен. Çак куна 1418 кун кĕтнĕçке! Хыпарсăр çухалнă Петĕр пиччĕшне килте кĕтсе илеймеççĕ. Тепĕр пиччĕшĕ Василий киле таврăнсан хăйĕн пурнăçне Инçет Хĕвелтухăçĕнче пурăнса ирттерет.

Мария тăван килне 1946 çулта кăна таврăнать, хăйĕн пурнăçне çĕр ĕçĕпе çыхăнтарать. Кĕçех ĕçчен хĕре Туçи Олкаш ял каччи, ĕнерхи фронтовик Данил Герасимов качча илет.

«Пурнăç ун чухне йывăрччĕ. Пӳрте ăшăтма вутă-шанкă та çителĕксĕртерехчĕ. Хăш чухне пӳртри шыв шăнса лармаллах сивĕччĕ. Çавна пулах пулĕ пирĕн икĕ ачан пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ», – хурланса калаçăва тăсрĕ Мария кинемей.

1951 çулта Мария Сергеевнăна Мăн Сĕнтĕрти хатĕрлев кантурĕнче ĕçлеме шанаççĕ. Çак ответлă ĕçре вăл 31 çул вăй хурать. Кунсăр пуçне ăна 8 çула яхăн Муркаш райповĕн хатĕрлев кантурĕнче те вăй хума тӳр килет. Вăл çулсенче хатĕрлев кантурĕсем халăхран 28 тĕслĕ чĕртавар пухнă: аш-какайран пуçласа эмел курăкĕпе тимĕр-тăмăр таранах.

Хатĕрлев кантурĕнче ĕçленипе пĕрлех килти хушма хуçалăхра та самай вăй хумалла пулнă. Вылăх-чĕрлĕх те усранă, ачи-пăчине те пурнăç çулĕ çине кăларнă. Çитменнине тата мăшăрĕ Данил Григорьевич фронтра сывлăхне хавшатнăран вăхăтсăр çĕре кĕнĕ.

Ĕçне кура хисепĕ те. Мария Сергеевнăна çĕнтерĕве çывхартассишĕн Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче ырми-канми ĕçленĕшĕн «1941 – 1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче хастар ĕçленĕшĕн» медальпе чысланă. Ĕç ветеранĕн ытти награда та чылай.

«Мухтав Турра мана çут тĕнчере çакăн чухлĕ усранăшăн», – тет паян Мария Сергеевна.

**П. ВОРОБЬЕВ.**

Туçи Олкаш ялĕ.

**Сăн ӳкерчĕкре: Мария Герасимова Василий пиччĕшĕпе тата мăнукĕпе.**

# Тăван çĕрте канлĕх тупрĕ



Çемье çавăрса пĕрлешнĕ хыççăн Аннăпа Тимофей Перковсем вунă çула яхăн кăна пĕрле пурăннă – Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вĕсене урăх тĕл пултарман. Вăрçа тухса кайнă мăшăрĕнчен Анна Александровна пĕр çыру та илсе курман.

1942 çулхи октябрĕн 9-мĕшĕнченпе Тимофей Перков **(сăн ӳкерчĕкре)** хыпарсăр çухалнисен шутĕнче пулнă. Унăн виллине кăçал апрелĕн 10-мĕшĕнче Старый Малгобек поселокĕ çывăхĕнче Чулхулари «Курган» тата Ингушети Республикинчи «Малгобек» шырав отрячĕсем тупнă. Салтакăн патрон гильзинчен тунă медальонне хут çырса чикнĕ пулнă иккен. Çав хут тăрăх вăл 1901 çулта Москакасси ял тăрăхĕнчи Сергеевка ялĕнче çуралнине, вăрçă вăхăтĕнче тинĕс пехотин 62-мĕш уйрăм бригадин 2-мĕш ротин хĕрлĕ армеецĕ Тимофей Перков пулнине çирĕплетнĕ. Экспертсем салтак снаряд лекнĕрен вилнине палăртаççĕ.

Çавăнпах Тимофей Перковăн виллине масар çине пытарма Ингушети Республикин тата Чечен Республикин представителĕсем Москакасси ял тăрăхне килсе çитрĕç. Вĕсем Тимофей Перкова халалласа ирттернĕ митинга хутшăнчĕç.

Мирлĕ пурнăçшăн пуç хунă ентеше юлашки çула ăсатма Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев, Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссарĕ Владимир Казаков, Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Денис Кириллов, ял-йыш, шкул ачисем хутшăнчĕç.

Тухса калакан кашни çын паянхи мирлĕ тӳпешĕн пуç хунă салтаксене яланах асра тытмаллине, çав хăрушă вăрçăра пуç хунă, анчах хыпарсăр çухалнă ытти салтак та ĕмĕрлĕх канлĕх тупма тивĕççине палăртрĕç.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пур наци çынни те пĕр халăх пек пулса фашистсене хирĕç кар тăнă. Кашни çапăçури çĕнтерӳ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. 1942 çулхи июлĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа 1943 çулхи октябрĕн 9-мĕшĕччен Кавказшăн пынă çапăçу та пысăк çапăçусенчен пĕри шутланнă. Нимĕç салтакĕсем нефть пур вырăнсене тытса илес тĕллевлĕ пулнă, анчах пирĕн харсăр салтаксем Кавказа вĕсен аллине паман.

Маларах асăннă бригада йышĕнче чăваш салтакĕсем сахал мар пулнă. Çав бригада тăватă атака сирнĕ, тăшманăн 80 танкне пĕтернĕ. Çакăн пек даннăйсем пĕлтерсе инçетрен килнĕ хăнасем чăваш салтакĕсем те Кавказри халăхсен мирлĕ пурнăçне çăлса хăварнăшăн чĕререн тухакан тав сăмахĕ каларĕç.

Вĕсем пулăшнипе пуç хунăранпа 76 çул иртсен Тимофей Перков Сергеевка ялĕн масарĕ çинче мăшăрĕпе Анна Александровнăпа (вăл 27 çул каялла çĕре кĕнĕ) юнашар ĕмĕрлĕхех тăван çĕрте канлĕх тупрĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

Акатуй

# Ĕçне кура – хисепĕ

**Район çыннисем районти юрăпа ĕç тата спорт уявне июнĕн 10-мĕшĕнче Лантăш вăрманĕн уçланкинче хаваслăн ирттерчĕç. Чылайăшĕшĕн вăл манăçми самантсемпе асра юлчĕ. Мĕншĕн тесен хăйсен хастар ĕçĕпе республика тата район шайĕнчи наградăсене тивĕçнисем йышлă пулчĕç.**

Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн водителĕ Михаил Яковлев **«Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ механизаторĕ»** хисеплĕ ята, Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн вылăх пăхакан рабочийĕ Эльвира Васильева, район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Зоя Дипломатова тата «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн участок пуçлăхĕ Валентина Соловьева **Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Тав çырăвне** тивĕçрĕç.

**Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине** илме тивĕçнисем уйрăмах йышлă. Ял хуçалăх отраслĕнче кун пек маттурсем пулни савăнтарать. Кусем вĕсем:

– Алевтина Андреева, «Моргаушская» чăхчĕп фабрикин апат-çимĕç продукчĕсене сутакан сутуçи;

– Иван Васильев, Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн машинăпа трактор паркĕн инженерĕ;

– Татьяна Васильева, Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн техник-осеменаторĕ;

– Елена Васильева, «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн Çĕньял Шурчари уйрăмĕн машинăпа ĕне сăвакан операторĕ;

– Иван Владимиров, «Ударник» ял хуçалăх производство кооперативĕн тракторист-машинисчĕ;

– Лилия Гаврилова, «Россельхозбанкăн» Муркашри хушма офисĕн тĕп операционисчĕ;

– Сергей Данилов, ăратлăх енĕпе ĕçлекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн водителĕ;

– Олеся Иванова, «Путь Ильича» агрофирмăн техник-осеменаторĕ;

– Георгий Курбанов, «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн сĕт-çу фермин апат хатĕрлекен цехĕн рабочийĕ;

– Андрей Лукин, ăратлăх енĕпе ĕçлекен Е. Андреев яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн бухгалтерĕ;

– Владимир Морозов, ăратлăх енĕпе ĕçлекен Е. Андреев яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн юсав мастерскойĕн заведующийĕ;

– Тамара Платонова, Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн хуралĕ;

– Татьяна Павлова, район администрацийĕн экономика тата АПК аталанăвĕн пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ;

– Леонид Петров, ăратлăх енĕпе ĕçлекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн председателĕ;

– Станислав Харьков, «Путь Ильича» агрофирмăн тĕп энергетикĕ.

**Чăваш Республикин Культура, национальноç ĕçĕсен тата архив ĕçĕн Хисеп грамотине** илекенсем те пулчĕç:

– Татьяна Ермолаева, «Тури чăвашсен музейĕ» муниципалитет бюджет культура учрежденийĕн директорĕ;

– Ирина Николаева, районти тĕп библиотекăн йĕркелӳпе методика секторĕн заведующийĕ.

**Чăваш Республикин Ĕç тата социаллă хӳтлĕх министерствин Тав çырăвĕпе** çаксене наградăларĕç:

– Валентина Аникинăна, районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхне;

– Ольга Ивановăна, районти социаллă пулăшупа тивĕçтерекен центрăн директорне;

– Татьяна Кирилловăна, районти социаллă пулăшупа тивĕçтерекен центрăн бухгалтерне.

**«Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» хисеплĕ ята** тивĕçнисем çаксем:

– Валентина Алексеева, Оринин шкулĕн историпе обществознани учителĕ;

– Болеслав Никитин, Чкалов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн механизаторĕ;

– Иван Степанов, «Ударник» ял хуçалăх производство кооперативĕн водителĕ.

**Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Хисеп грамотине** çаксене парса чысларĕç:

– Николай Белова, Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне;

– Валерий Дашкова, Сыпай шкулĕн директорне;

– Валерий Степанова, «Путь Ильича» агрофирмăн водительне;

– Николай Максимова, «Ударник» ял хуçалăх производство кооперативĕн тракторист-машинистне;

– Елена Ивановăна, район администрацийĕн ЗАГС пайĕн пуçлăхне.

Муркаш район тĕп больницин невролог врачне Валериан Васильева тата «Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕн тĕп инженерне Виктор Фомина **Чăваш Республикин гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру ĕçĕсен патшалăх комитечĕн Хисеп грамотине** парса чыс турĕç.

**Чăваш Республикин муниципалитет йĕркеленĕвĕсен канашĕн Хисеп грамотипе** çаксене наградăларĕç:

– Илья Захарова, «Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕн директорне;

– Светлана Никифоровăна, Уйкас Янасал ял тăрăхĕн пуçлăхне;

– Евгений Орлова, Турай ял тăрăхĕн пуçлăхне;

– Валентина Пушковăна, район администрацийĕн экономика тата АПК аталанăвĕн пайĕн тĕп эксперт специалистне;

– Ольга Тимофеевăна, район администрацийĕн экономика тата АПК аталанăвĕн пайĕн пуçлăхне.

«Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн председателĕ Галина Иванова, район администрацийĕн секторĕн заведующийĕ Андрей Степанов тата Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Денис Кириллов **Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕн Л.И. Черкесовăн Тав çырăвне** тивĕçрĕç.

**Чăваш наци конгресĕн Хисеп грамотине** тивĕç пулнисем хушшинче:

– Галина Голубева, Москакассинчи Культура çуртĕн заведующийĕ;

– Ольга Григорьева, ачасен Муркашри искусство шкулĕн директорĕ;

– Лидия Павлова, район администрацийĕн ĕçсен управленийĕн тĕп эксперт специалисчĕ.

(Вĕçĕ 4 стр.)

Акатуй

# Ĕçне кура – хисепĕ

(Пуçламăшĕ 3 стр. )

**Чăвашпотребсоюзăн Хисеп грамотине çаксене** пачĕç:

– Вячеслав Алексеева, Муркаш райповĕн водительне;

– Николай Николаева, Муркаш райповĕн товароведне;

– Лилия Бочкаревăна, Мăн Сĕнтĕр райповĕн Апчар магазинĕн заведующине;

– Ольга Серовăна, Мăн Сĕнтĕр райповĕн Шомик магазинĕн заведующине.

Мăн Сĕнтĕр райповĕн «Илем» кафе поварĕ Светлана Куликова **Чăвашпотребсоюзăн Тав çырăвне** тивĕç пулчĕ.

«Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн пăру пăхаканне Татьяна Мишинăна **профсоюз организацийĕсен Чăваш Республикинчи пĕрлешĕвĕн Хисеп грамотине** парса чысларĕç.

**Культура ĕçченĕсен профсоюзĕн Чăваш Республикинчи комитечĕн Хисеп грамотине** çаксем тивĕçрĕç:

– Владимир Александров, ветерансен Орининти Культура çуртĕн «Орин ен» халăх хорĕн хормейстерĕ;

– Ирина Ветлугина, Юнкă ял библиотекин заведующийĕ;

– Орининти Культура çуртĕн халăх театрĕ;

– Ярапайкассинчи Культура çуртĕн «Екрем» халăх фольклор ансамблĕ;

– Турайри Культура çуртĕн «Турай» художество пултарулăх коллективĕ.

**Патшалăх учрежденийĕсен тата обществăллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен ĕçченсен профсоюзĕн Чăваш Республикинчи комитечĕн Хисеп грамотине** çаксене парса палăртрĕç:

– Манефа Колесниковăна, Хорнуй ял тăрăхĕн пуçлăхне;

– Светлана Михайловăна, Оринин ял тăрăх администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканне.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Ĕçпе тивĕçтерекен центрта

# Вакансисен ярмăрkки иртет

Ĕç шыракансене пулăшас тĕллевпе халăха ĕçпе тивĕçтерекен Муркашри центр тĕрлĕ мелпе усă курать. Вĕсенчен пĕри – вакансисен ярмăрkки.

Çитес ярмăрkкă «Химпром» пĕрлешӳ хутшăннипе июнĕн 26-мĕшĕнче 9 сехетре пулать.

Асăннă пĕрлешӳ малашне тĕрлĕ специальноçлă çынна ĕçе илес тĕллевлĕ. Вĕсен шутĕнче юсавçă-слесарь те, хӳтĕлев сигнализацийĕн электромонтерĕ те, оборудование пăхса тăракан тата юсакан электромонтер та, ыттисем те.

Предприяти ĕç укçине вăхăтра тӳлеме шантарать. Унти ĕç графикĕ меллĕхпе тивĕçтерет, ют ял-хуласенчен килнисене общежити вырнаçтарĕç.

Вакансисен ярмăрkкине хутшăнас текенсене асăннă вăхăта халăха ĕçпе тивĕçтерекен Муркашри центра йыхравлатпăр (район администрацийĕн çурчĕ, 329 пӳлĕм). Телефон номерĕ: 8(83541)62-1-66.

**Ĕçпе тивĕçтерекен центр.**

Ял уявĕ

# Ятмансем ял кунне йыхравлаççĕ

Районта ял кунĕсем иртеççĕ. Иртнĕ эрнере акă Хорнуй ял тăрăхĕнчи шаптаксем те ял кунне юрă-ташăпа, тĕрлĕ курав хатĕрлесе, техĕмлĕ шӳрпе пĕçерсе уявланă.

Июнĕн 23-мĕшĕнче Ятман ялĕнче пурăнакансем те ял кунне паллă тăваççĕ. Çак ялта çуралса ӳснисене, районти ытти ял çыннисене те уява йыхравлаççĕ.

**Хамăр инф.**

Объявления / Пĕлтерӳсем

**Об организации работы организаций, осуществляющих розничную продажу алкогольной продукции в дни проведения выпускных вечеров, балов в общеобразовательных организациях Моргаушского района Чувашской Республики**

Согласно Постановления Кабинета Министров Чувашской Республики от 14.11.2012 г. № 481 «Об установлении дополнительных ограничений времени, условий и мест розничной продажи алкогольной продукции на территории Чувашской Республики» администрация Моргаушского района Чувашской Республики рекомендует организациям, имеющим лицензию на реализацию алкогольной продукции, в дни проведения выпускных вечеров, балов в общеобразовательных организациях Моргаушского района 21 и 26 июня 2018 года в Моргаушском районе Чувашской Республики, выполнять требования Постановления, устанавливающее запрет розничной продажи алкогольной продукции объектами торговли, находящимся в Моргаушском районе Чувашской Республики.

Объявления / Пĕлтерӳсем

**ПРОДАЮ: ПЕСОК, ОПГС (ГРАВМАССА), ПГС, ЩЕБЕНЬ, КЕРАМЗИТ и др. ДОСТАВКА из с. МОРГАУШИ. НЕДОРОГО. Тел. 8-927-862-42-44.** 3-10.

компания немецкие ОКНА И ДВЕРИ • рольставни • ворота • жалюзи • замер • доставка (бесплатно) • установка под ключ всего от 3900 руб/м² 10-10. 8(927)844-78-11 · 68-78-01

**Продаю кур, гусят, утят, мулардов, бройлеров, индюков. Бесплатная доставка. Тел. 8-909-300-08-18.** 12-21.

* * *

**Куплю скотину дорого: бычков, КОРОВ, телок, ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Тел. 8-961-346-19-79.** 13-17.

* * *

**Продаю ДЕШЕВО асфальтную крошку, щебень (ОПГС), гравмассу, песок, бой кирпича, чернозем, торф, навоз. Доставка. Тел. 8-961-347-25-47.** 3-14.

* * *

**Продаю: Гравмассу. Бой кирпича. Песок. Щебень. Доставка. Тел. 8-905-028-22-25.** 10-10.

* * *

**КУПЛЮ КОРОВ И БЫЧКОВ. ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Купим и больных. Тел. 8-927-851-27-77.** 9-17.

* * *

**Продается однокомнатная квартира пл. 37,06 кв.м. в строящемся доме по ул. Парковая, 7 «А». Цена договорная. Обращаться по тел. 8-903-345-83-59.** 4-5.

* * *

**Продаю однокомнатную квартиру пл. 36,0 кв. м. с евроремонтом в СЗР г. Чебоксары по ул. Ахазова, 1/9 этажн. дома. Тел. 8-917-659-37-13. Людмила.** 2-3.

* * *

**Куплю бычков от месяца до 600 кг, коров, телок. Дорого. Тел. 8-937-952-33-80.** 4-5.

* * *

**Фундамент, кирпичная кладка, кровля любой сложности. Деревянные дома и бани, отделка домов сайдингом. Металлочерепица, профлист, сайдинг по низким ценам. Проект, смета бесплатно. Тел. 8-987-670-56-78.** 5-10.

* * *

**Продаем ячмень, пшеницу озимую. Цена – 7 руб. Возможна доставка. Тел. 8-927-843-52-40.** 3-3.

* * *

**ИП Налимов: монтаж систем отопления, водоснабжения, канализации; замена, установка газовых котлов и насосов. Установка, замена дымоходов. ПРОДАЮ ГАЗОВЫЕ КОТЛЫ, СЧЕТЧИКИ и др. Обращаться: с. Моргауши, здание бани, 2 этаж. Тел. 8-905-345-93-19.** 1-10.

* * *

**СХПК ПЗ им. Е. Андреева реализует сено нового укоса, 600 руб. за рулон. Тел. 62-1-97, 8-937-012-58-80, 8-937-012-51-31, 8-937-012-73-75.**

**Продаем пиломатериалы обрезные, кровельные 25 мм, половые 50 мм, брус любого размера; цемент. Доставка бесплатно.** Цена договорная.Тел. 8-903-346-40-58, 8-927-996-16-52. 4-10.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ Тел. 8-927-667-40-92.** 40-48.

**ПРОДАЕМ: керамзитобетонные блоки, кирпичи, цемент, песок, гравмассу. УСЛУГИ манипулятора, самосвала. Тел. 8-960-307-41-78.** 13-25.

**Продаю ГРАВМАССУ, ПЕСОК. Тел. 8-905-199-69-33.** 13-30.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел. 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 6-10.

**Продаю: ПЕСОК, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ. Доставка. Тел. 8-903-065-60-58.** 5-44.

**Продаю: ПЕСОК, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ. Доставка. Тел. 8-919-650-96-68.** 4-8.

**Продаю: ПЕСОК, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ. Доставка. Тел. 8-903-389-94-76.** 4-8.

**РАБОТА В МОСКВЕ. ВАХТА. Приглашаем женщин на очистку овощей. 12-часовой рабочий день. Проживанием, 3-х разовым питанием обеспечиваем. Оплата – 1000 руб. в день. Тел. 8-963-915-37-03.** 1-3.

* * *

**Требуются официантки, кассиры, повары в кафе «Юмарт» (д. Юнгапоси, АЗС «Ирбис»). Тел. 8-960-075-05-26.** 1-2.

* * *

**Продаю двух отелившихся коров, можно с телятами, д. Кюрегаси. Тел. 8-917-667-84-04. Людмила.**

* * *

**Продается земельный участок 40 сот. с деревянными постройками. Цена договорная. Тел. 8-906-136-81-40.**

* * *

**Продаю пшеницу 8 руб/кг и мелкий картофель 1,50 руб/кг. Тел. 8-961-338-21-08.**

* * *

**Продаю сено (разнотравье) в рулонах и тюках, картофель крупный и мелкий. Возможна доставка. Тел. 8-905-199-92-46.**

* * *

**Продаю бревенчатый дом с надворными постройками в д. Ижелькасы, зем. уч. 40 сот. Цена – 300 тыс. руб. Тел. 8-960-301-81-65.**

* * *

**ООО «МИРТРУБПЛАСТ» требуются операторы экструдера, комплектовщики. Тел. 8 (83541) 69-3-43.** 1-3.

**Требуется МЕНЕДЖЕР ЗАЙМОВ в КПК Содружество» (отделение с. Моргауши).**

**Требования**: наличие средне-специального или высшего (экономического либо финансового) образования; уверенные навыки работы на компьютере; приветствуется знание «1С Предприятие»; умение общаться с людьми, коммуникабельность; положительные личностные качества.

**Условия**: график работы 5/2, постоянная работа; трудоустройство согласно ТК РФ.

Резюме направлять по эл. почте sodrugestvo21@mail.ru Тел. 8 (8352) 45-03-83, 8-952-020-77-89. 1-2.

**ТАВ ТĂВАТПĂР**

Орининта пурăннă, районти тĕрлĕ организацисенче тĕп инженерта ĕçленĕ Илья Сергеевич Соловьева юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн пур тăван-хурăнташа, кӳршĕсене, ял-йыша, райгазра пĕрле ĕçленисене, унпа сывпуллашма килнĕ мĕнпур çынна чĕререн тав тăватпăр.

**Ачисем.**

Çатракасси вăтам шкул администрацийĕ Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕн Н.Г. Ивановăн ашшĕ

**Герман Васильевич МАЙОРОВ**

чылай хушă чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн, тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Москакассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ çак шкулта нумай çул ертӳçĕре ĕçленĕ

**Петр Иванович ЖИВОЙКИН**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн, тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Прогноз погоды — По данным сайта rp5.ru

| | Среда | | | | Четверг | | | | Пятница | | | | Суббота | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Явления погоды | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура | +19 | +19 | +21 | +17 | +15 | +19 | +20 | +17 | +15 | +20 | +23 | +16 | +14 | +24 | +26 | +21 |
| Давление | 740 | 738 | 739 | 739 | 740 | 741 | 741 | 741 | 742 | 744 | 745 | 745 | 746 | 747 | 747 | 747 |
| Ветер | 4 | 5 | 8 | 5 | 5 | 8 | 9 | 6 | 5 | 6 | 4 | 1 | 2 | 1 | 1 | 3 |
| Порывы | 7 | 13 | 17 | 12 | 10 | 15 | 18 | 14 | 9 | 11 | 11 | 4 | | 4 | | |
| Направление | Ю-З | Ю-З | З | З | З | З | З | З | З | С-З | С-З | С | Ю | Ю | Ю-В | Ю-В |

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви
ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин "Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редакторшăн Н.Н. НИКОЛАЕВА

Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
Телефонсем: тĕп редактор - 62-1-36, бухгалтери - 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: smi24@cap.ru, smi24-1@cap.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Реклămăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Р– реклама материалĕ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юнкунсерен тата шăматкунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ А.П. Белов
Пичете панă 19.06.2018 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4761

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии АО «ИПК «Чувашия»: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.